К84.89(=Чув)
К27
Ч-45942

Марина Карягина

# Аптраман кăвакал



Национальная библиотека ЧР
4-045942

К84.89(=Чув)
К27
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР



Марина Карягина

# Аптраман кăвакал

*Сăвăсем*

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2013

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув)6-5
К 27

Художникĕ ***С.А. Кангина***



Ч-45942

Проверено 8 СЕН 2017

Национальная библиотека
Чувашской Республики

**Карягина М.Ф.**
К 27 Аптраман кăвакал: сăвăсем / М.Ф. Карягина. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2013. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2069-0

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2Рос=Чув)6-5**

**ISBN 978-5-7670-2069-0**

© Карягина М.Ф., 2013
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2013

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР



## ÇĔТĔК АЧА

Ун ятне пĕлетĕн эс:
Никама та итлемест.
Курнă-курнă та, анчах
Ун пекки курман пачах.
Ним сăлтавсăр çĕтĕлет,
Тумне çĕрте сĕтĕрет.
Йĕрет, урать, çухăрать,
Хăйĕнчен çеç кăшт хăрать.
Урам тулли кăшкăрать:
— Ирĕк парăр Кашкăра!
Кашкăр-кашкăр кашаман,
Каçма урлă каçайман.

Пӑнкӑльт чӑмрӗ ҫырмана,
Ҫыр ҫамкине чӑрмалать:
— Ма таса мар пылчӑку?
Мӗнле ача пулчӗ ку?
Кӗрес пулсан лавккана
Ун ҫӳресчӗ лӑп кӑна.
Те ишесшӗн урайне:
— Илсе пар лавкка, анне!
Йӑваланса макӑрать,
Сасси кӑраран кӑра.
Мӗн тӑвасшӑн лавккапа?
Тумӗ-юмӗ пӗр купа...
Вӗрентесчӗ тирпее!
Чӗнсе пӑх-ха, вӑл чее:
Йӗп-йӗпе хӑй, типӗ тет.
Кӗртейместӗн ӳкӗте.
Тарӑхакан ачана
Тӑрӑхлать кашни Чана.
Урӑх сасӑ ку ачан —
Каснӑ лартнӑ ҫурӑк чан.
Ҫӳҫӗ-пуҫӗ тӑрмаланчӑк —
Хӑранипе тармаллаччӗ.
Ҫӗткеленчӗк пулнӑран
Тумӗ ҫӗтӗлнӗ, куран.
Унӑн, тен, хӑлхи те ҫурӑк —
Вӑрттӑнлӑх ан калӑр урӑх.
Катемпи пек мелкемес,
Темшӗн йӗркене кӗмест.
Ӗнтӗ умӗ ҫурӑк-ҫарӑк,



Ĕнтĕ тумĕ çурăк-çарăк,
Ĕнтĕ йĕмĕ çурăк-çарăк,
Ĕнтĕ сумĕ çурăк-çарăк —
Хăть патак тытса хĕне.
Хăй сисмен те, хайхинне
Шăтса тухнă хăлхине
Çурăк çарăк.

— Çарăк, — терĕ Качака,
Тем систерчĕ Чакака.
— Çурăк... — кулчĕ Сурăх,
Шарламарĕ урăх.

— Ме-е-елкемес! — тет Çурăка
Ик кĕлентĕр — çаврака





Мăйрака,
Мăйрака та мар — Така.
Ярса тытрĕ те патак
Так! терĕ,
Шăпăрт тăчĕ тепĕртак.
(Така мар пуль ку халь — Так.)
Лекĕ-и патак ăна? —
Такăнтарчĕ Такана.
Таки тăрать тĕк кăна,
Ку выртать пĕр такана.
Хăратасшăн такама
Çухăрашать тарама.

Ĕнтĕ çурăк такана —
Çурăк шывĕ тăкăнать,
Шарт сиктерчĕ пăлана,
Юхса кайрĕ Пăлана,
Çырма çурчĕ çурмалла
Çурăк-çарăк мар яла.
Хай йĕркесĕр вашт кăна
Ларса юлчĕ юшкăна.
Пăхса тăран ушкăна
Ахăрттарчĕ пĕр кана.
Ĕнтĕ çурăк-çарăк ял,
Ĕнтĕ çурăк-çарăк мал,
Ĕнтĕ çурăк-çарăк кай,
Кай-кай-кай!..
Çурăк çĕр те çурăк ту,
Пĕр çĕрте те çук тату.



Çурăк уйăх пуç çинче,
Ĕнтĕ çурăк пур тĕнче...
Хальччен курман тамаша
Пулса тăчĕ чĕр нуша!
Мĕн тăвас ку ачапа?
Мĕн тăвас усал чаппа?

Ашшĕ-амăш хурланать:
«Тăрăшни йăлт харама».
Ыйхи çĕтнĕ кукаçин:
«Иртĕнтерчĕç ытлашши!..»
Кукамайĕ кулянать:
«Куç ӳкерчĕç пуль ăна?»
Ват асламăш чупкалать,
Ват аслашшĕ тӳт калать...

* * *

Çичĕ тинĕс леш енчен
Вĕçсе килчĕ Çĕвĕç хурт,
Никам курман Çĕвĕç хурт,
Нихçан пулман Çĕвĕç хурт.
— Çĕтĕк кăмăллă тесе
Ма тиркес Мелкемесе?
Ачи хамăрăн, тĕнчен,
Тăна кĕтĕр ӳсиччен.
Юсамалăх пур саппас:
Тӳпепе умне саплас,
Уй-хирпе тумне хăтлас,
Кăмăлне темпе чутлас?..



Йĕп вăрринчен йĕп вăрларĕ,
Эрешменпе çип арларĕ,
Шав ĕçлерĕ — эрешлерĕ,
Йĕр йĕрлерĕ — тĕр тĕрлерĕ...
Шеп те пулчĕ ун тĕрри,
Селĕмленчĕ ял варри,
Чечекленчĕ ял хĕрри —
Чеченленчĕ çав тери!
Илемленчĕç çĕр те ту,
Ĕлккенленчĕ те — тату.
Хӳхĕм уçлăх пуç çинче,
Эреветлĕ пур тĕнче!

Капăр тумлă ачана
Паллаймарĕ те Чана.
Сасси янкăс халь ачан,
Ăмсанать кашни-пĕр чан.
Тип-тирпейлĕччĕ хăй питĕ,
Чип-чиперччĕ сăнĕ-пичĕ...
Тавтапуç Хурт çĕвĕçе
Тиркеменшĕн ют ĕçе!





## КУЛĂ

Тĕлĕнтермĕшех çав кулă:
Кулăран хăрать-мĕн хулă,
Хулăран хăрать-мĕн пулă
(Вĕтĕ пулă мар, акула!) —
Ак мĕнле хăват вăл кулă!

Килес çул кула-кула
Уттарасшăн эп шкула.
Пысăкланăп кулăпа,
Тен, танлашăп улăппа?



## ĂСЛĂ КАЧАКА

Кĕтӳ пуçĕ —
качака,
Урисем тăр лачака,
Мăйраки те, мăйĕ те,
Мăйăхĕн çук майĕ те...

Çăмĕ тулли куршанак —
Сехре хăпĕ курсанах!
«Мĕнлĕ чĕрĕп ку?» — тесе
Хĕсĕнетĕп кĕтесе.

Манса кайрĕ кил тĕлне,
Тара пачĕ ту енне.
Чикĕл-мекĕл ӳкĕ те —
Пĕрех кĕмĕ ӳкĕте.

Кĕтӳ пуçĕ — качака
Курмăш пулать патака!
Çăкăрпа та илĕртеп,
Кил теместĕп, килĕр теп!

Килĕр, килĕр, килĕр теп —
Ун кăмăлне пĕлеп эп.
Эх, качака терчĕ,
Çирĕ те вĕçтерчĕ!

Кĕтӳ пуçĕ — качака,
Ма вăй виçен ачапа?
Чапа тухăп тетĕн-и?
Паттăр пулăп тетĕн-и?

Качăр-качăр качака
Итлемерĕ маçака,
Кĕмест уçă хапхаран —
Хуса кĕтĕмĕр аран...

Тин ăнлантăм сан ăсна,
Çирĕп кăмăллă сăнна:
Эс мана, тара-тара,
Кăларасшăн паттăра!



И-45942
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## АПТРАМАН КӐВАКАЛ

Пӗр мучипе кинемин
Пулнӑ тӑват кӑвакал:
Виҫҫӗшӗ — кӑвак,
Пӗри — кӑвак мар,
Пач та ыттисем пек мар —
Тӑваткал!

Виҫӗ кӑвакалӑн
Пулнӑ тӑват алӑ,
Тӑваткаллин
Пулман алли.

Кӑваккисем кӑваклатнӑ,
Ҫунаттисене тӑратнӑ.
Тӑваттӑмӗш, Тӑваткал,
Тӑратман.

Пӗрехмай вӑл тӳснӗ,
Ӳснӗ, ӳснӗ, ӳснӗ...
Мӗн кӑтартӗ ӳлӗм
Ҫап-ҫаврака кӳлӗ?..

Пӗр уяр каҫ кӳлӗм
Кӗтесленнӗ кӳлӗ!



# ТАКАМ

Алăкран шаккать такам,
Кантăкран шаккать такам.
— Кам шаккать унта? Такам...
Пĕр сăмах пĕлмест Такам.

Мăрьерен тем кăшкăрать,
Витлесессĕн — вăшт тарать,
Хăй те такамран хăрать —
Хăраман пек ахăрать.

Выçă-ши хăй, тутă-ши?
Мĕн çиет-ши? Утă-ши?
Утта çисе ямĕ-ши? —
Выçĕ пăру амăшĕ...

Курăнмасть те ман куçа —
Пурпĕр тĕнчипе хуçа.
Пур çĕре те ĕлкĕрет,
Йĕкĕлтешет куç кĕрет.

Манпа тан çăва кĕрет,
Манпа тан кĕре кĕрет,
Манпа тан хĕле кĕрет,
Манпа тан çура кĕрет...

Мăрьерен кĕре-кĕре
Кĕр! кĕрлет кĕрекере.
Мачча çинче тустарать —
Килнĕ тус тухса тарать.



Пăлтăр-палтăр çаврăнать —
Пăлтăр пулса чарăнать.
Килсе тăкрĕ пĕр купа
Хĕл тулли шап-шур упа...

Вăл çапла ытла кăра тăк
Эп ăна кĕç хам хăратăп!
Пите сĕртĕм хăрăмпа,
Шуса пытăм хырăмпа, —

Кап тытрăм пĕр ывăç,
Пулчĕ тăчĕ чĕр йывăç.
Силлентерчĕ те çиле —
Вĕçсех кĕтĕм эп киле!..

Кам пĕлет Такам камне?
Паллă тăвăр çурăмне.
Курăпин хăть çур сăнне —
Тавçăраттăмах камне.

Кам та кам паллать ăна —
Ят парсамăр Такама...
Чим! Арка чăмлать такам —
Паллă тунă пĕр така!



# ПЁЧЧЕННИ

Ма пёччен-ши эп килте? —
Хам сасса кăна илтеп.

Тантăшăм епле пуян!
Шутсăр савăк вăл ялан:

Макăрас чухне кулать —
Пиччĕшĕ хуçать кулач.

Шăкăл-шăкăл тем калать —
Шăллĕ катать шоколад.

Кушак евĕр чăрмалать —
Пурпĕр çиет мармелад.

Хыр çинчеччĕ манпалан —
Хай татса ларать банан!

Хыр çинчен мĕнле анас? —
Аппăш сĕнет ананас.

Эп, килте пĕр-пĕчченни,
Çисе çӳреп печени...






## ӲКЕРЧĔК

Савăтра ик-виç икерчĕ —
Лар та эс ӳкер ӳкерчĕк.
Натюрморт? Пейзаж? Портрет?
Урамра-и е пӳртре?
Урамра паян хитре —
Иртенпех шап-шур тĕтре.
Умăмра пулсассăн торт
Ӳкерĕттĕм натюрморт.
Ӳкерес автопортрет —
Тĕкĕр аллăмра чĕтрет.
Ӳкерес апла тĕтре —
Чунăма кĕрет кĕтрет.



* * *

Пирӗн пата пускил пычӗ,
Палляна пӗремӗк пачӗ,
Петьӑна пашалу пачӗ,
Пиччене пӳремеч пачӗ,
Пачӗ-пачӗ, пачӗ-пачӗ...
Пӑртакран пат печӗ ячӗ:
«Пыл парсамччӗ —
пултӑр парӑм...»
Пурри пурччӗ-ха — памарӑм...



* * *

Аттепе шыратпăр йытă.
Кун сасси ытла та хытă,
Кун — ачаш, ку — аçа,
Ку, ами, ытла ача.

Аттепе шыратпăр йытă.
Йĕркипе тиркесе пытăм:
Сенбернар, доберман...
Кун пекки нихçан курман!

Ку — ытла вăтанчăк анчăк,
Кăкарсан та çук-тăр шанчăк.
Лăпăр-лапăр лабрадор,
Шав чĕтрет хăй тăр-тăр-тăр!

Кӳршĕрех хавас Мухтарăн
Мухтамалăх пур çăварĕ.
Чихуахуа
Апчхулатрĕ пĕр хула.



## МАКĂРА МАКАР

Пирĕн Макар — макăра,
Макăрашнă чух — кăра.
Ахăрма хăй ахăрать —
Ахрăм пуласран хăрать.

— Ахăратăп, ахăратăп!
А-а-а! Хăратăп...
— Эс, тархасшăн,
шăппăн ахăр, —
Йăпатасшăн шăкăр-макăр.

Пирĕн Макар — макăра,
Макăрни — хăйне кура.
Макăрма хыт макăрать —
Вăкăр пуласран хăрать.

— Эпĕ ăна кăкаратăп,
Вара пурпĕр макăратăп!
— Эс этем ĕретлĕ макăр, —
Тет аптранă шăкăр-макăр.

Чарăнмарĕ çав Макар —
Тарчĕç пурте чăл та пар.
— Ман çăвара чикĕр! —
Терĕ çăткăн тигр.

# ТУПМАЛЛИ


Ҫӗтӗк ача . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Кулӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Ӑслӑ качака . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Аптраман кӑвакал . . . . . . . . . . . . 18
Такам . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Пӗчченни . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Ӳкерчӗк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
«Пирӗн пата пускил пычӗ...» . . . . . 27
«Аттепе шыратпӑр йытӑ...» . . . . . . 28
Макӑра Макар . . . . . . . . . . . . . . . 30




Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Карягина Марина Федоровна**

**АПТРАМАН КӐВАКАЛ**

**НЕОБЫЧНАЯ УТКА**

**Стихи**

*На чувашском языке*

Художник *С.А. Кангина*
Редактор *Н.В. Вечеркина*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

6+ Информаци продукцийӗн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010)
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. №436 ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 27.05.13. Формат 84х108 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,36.
Учетно-изд. л. 2,17. Тираж 1500 экз. Заказ № 769. Изд. № 16.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

40.00



Чӑваш кӗнеке издательстви